## *СТРУКТУРА И ГРАММАТИКА ЯЗЫКА*

*В. И. Сергеев,*
*И. Н. Ульянов ячĕллĕ чăваш патшалăх университечĕ*
*Шупашкар*

# И.П.ПАВЛОВ ТĔПЧЕВĔСЕНЧИ ДЕЕПРИЧАСТИ ЫЙТĂВĔ

И.П.Павлов чăваш чĕлхе наукине деепричасти (ĕçхĕлтеш) проблемине тарăннăн тĕпчесе çырса кăтартнă чĕлхеçĕ пек пырса кĕнĕ. Ку темăпа вăл кандидат диссертацине çырса тивĕçлĕ хӳтĕленĕ. Диссертацин тĕп шухăшне автор 1957 çулта пичетленсе тухнă «Материалы по грамматике современного чувашского языка: Морфология» (Чебоксары, 1957. – С. 240–272) ăслăх грамматикинче уйрăм пуплев пайĕ пек пичетлесе кăларнă*. И.П.Павлов деепричасти уйрăм пуплев пайĕ пулнине ниçта та каламан, анчах кĕнекен «Тупмаллинче» вăл ытти пуплев пайĕсен ретĕнче тăрать.

Пĕр статьярах деепричастин пур формисене те И.П.Павлов ăслăх ĕçĕсенче çутатса панине хаклама

* И.П.Павлов деепричасти темăна çак ĕçсенче çутатнă: 1) Хальхи чăваш литература чĕлхи: Морфологи. – Шупашкар, 1965. 286–296 с.; 2) К вопросу о происхождении двух деепричастных аффиксов в чувашском языке // Ученые записки ЧНИИЯЛИЭ. – Вып. XIV. – Чебоксары, 1956. С. 246–257; 3) О двух типах деепричастных конструкций: К вопросу о придаточном предложении // Ученые записки. ЧНИИЯЛИЭ – Вып. XII. – Чебоксары, 1954. – С. 48–74; 4) V–VI классенче чăваш чĕлхин морфологине вĕрентесси. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1985. 96–98 с.

май çук, çавна май эпир *-са (-се)* аффикслă деепричастипе çыхăннă ыйтусене пăхса тухасшăн. Ку аффикспа йĕркеленнĕ деепричастисем хăйсен пулăвĕпе те, функцийĕпе те, пĕлтерĕшĕсемпе те кăсăклисен шутне кĕреççĕ.

Пулăвĕ тĕлĕшĕнчен *-са (-се)* аффикс ытти тĕрĕк чĕлхисенче ун аналогĕ çуккипе уйрăлса тăрать, тĕрĕк чĕлхисенчи *-п* аффикслă деепричасти чăваш чĕлхинче пуррине палăртман. Апла пулсан *-са (-се)* тата *-п* аффикслă деепричастисене функци тĕлĕшĕнчен кăна пĕр рете лартма пулать.

Пирĕн шутпа, И.П.Павловăн çак шухăшĕ питĕ кăсăклă: «Ку деепричастин хирĕçлев аспекчĕ глагол тĕпĕпе деепричасти аффиксĕ хушшине *-ма (-ме)* аффикса кĕртсе лартнипе пулать. Анчах та ун пек чухне деепричасти аффиксĕ хальхи вариантне мар, авалхи вариантне çывăхраххине йышăнать; танл.: *кур-са – кур-ма-сăр, пĕл-се – пĕл-ме-сĕр*», – тени кĕрет. Паллах, И.П.Павлов шухăшĕ питĕ кăсăклă та, çивĕч те, тавлашуллă та. Анчах И.П.Павлов хăйĕн малашнехи ĕçĕсенче ку шухăша пĕртте пăрахăçламан. Ун шухăшне О.Прицак килĕштернине пăхмасăрах, эпир Н.И.Ашмарин, В.Г.Егоров шухăшĕсем тĕрĕслĕхе çывăхрах тесе шутлатпăр: *пĕл-ме-сĕр, кур-ма-сăр* йышши формăсенче хирĕçлев пĕлтерĕшне *-ма (-ме)* инфинитив аффиксĕ мар, *-сăр (-сĕр)* аффикс пурнăçлать.

Чăваш чĕлхинче *-са (-се)* аффикслă деепричастин *-масăр (-месĕр)* аффикслă хирĕçлев аспекчĕ пурри пирки Л.С.Левитская иккĕленет. Н.И.Ашмарин та, В.Г.Егоров та ун пек шухăш патне пырса тухман. И.А.Андреев шучĕпе те, *-масăр (-месĕр)* аффикслă формăсем *-са (-се)* деепричастин хирĕçлев аспекчĕ мар, хăйне уйрăм деепричасти шутланаççĕ. Ку шухăш та хирĕçÿллĕ.

Н.И.Ашмарин *пулмасăр* сăмахра çакăн пек пĕлтерĕшлĕ пайсем пуррине палăртать: «Собственно *пулмасăр* – отрицание супина (т.е. инфинитива. – *В.С.*) на *-ме* (*пулма+сăр*, без того, чтобы стать) [Ашм. Матер. 302].

Асăрхаса пăхсан çакна курма пулать: *-ма (-ме)* аффикс – инфинитив аффиксĕ; *-сăр (-сĕр)* çуклăх падеж аффиксĕ пулнине чăваш чĕлхинчи *-машкăн (-мешкĕн)* инфинитив аффиксĕ çирĕплетме кирлĕ. Тури диалектра халĕ те хăш-пĕр калаçусенче *-макшăн (-мекшĕн)* формăсем çӳренине Н.И.Ашмарин, В.Г.Егоров тата Л.П.Сергеев палăртаççĕ: *кай-мак-шăн > кай-машкăн; килмекшĕн > килмешкĕн.* И.П.Павлов та ку шухăша хăйĕн «Морфологийĕнче» лайăх ăнлантарнă (261 с.): «К» тата «ш» сасăсем метатеза йĕркипе хăйсен вырăнне улăштарнă та *-мак-шăн (-мек-шĕн)* формăсенчен уйрăлми пĕрлĕхлĕ *-машкăн (-мешкĕн)* аффикс пулса тăнă, халĕ ăна *-маш+-кăн (-меш+-кĕн)* пайсене уйăрма çук.

Инфинитив ят сăмахсенчен пулса кайнине шута илсен, малтанхи вăхăтра *-мак (-мек)* аффикслă япала ячĕсем те, кайрантарах инфинитивсем те падеж аффиксĕсене йышăнма пултарнă. Асăрхăр: *чармак, шыçмак, сукмак, тăсмак, чикмек* ят сăмахсенче *-мак (-мек)* аффикс хăйĕн авалхи тăрăмне сыхласа хăварнă, анчах *пусма, хӳме, çырма, çĕртме, чикме, каçма, пĕрме, пӳлме* сăмахсенче аффиксри «к» сасă ауслаутра çухалнă.

Çапла вара, хальхи вăхăтра *-ма (-ме)* аффикслă инфинитив *-сăр (-сĕр)* çуклăх падеж аффиксне йышăнни куçкĕретех. Малтанрах инфинитив *-шăн (-шĕн)* пирке падеж аффиксне йышăннине те сивлеме нимĕнле сăлтав та çук. Вĕсене реликт формисем темелле.

Паллах, *-ма (-ме), -мак (-мек)* аффикслă ят сăмахсем пур падеж аффиксне те йышăнмаççĕ, у.к. вĕçленеççĕ:

| | | |
|---|---|---|
| Тĕп | сукмак | хӳме |
| Кам. | сукмак-ăн | хӳме-н |
| Пар. | сукмак-а | хӳме(н)-е |
| Выр. | сукмак-ра | хӳме-ре |
| Тух. | сукмак-ран | хӳме-рен |
| Çук. | сукмак-сăр | хӳме-сĕр |
| Пирк. | сукмак-шăн | хӳме-шĕн |

Халĕ деепричастин (ĕçхĕлтешĕн) палăртăмне тишкерер: «Деепричасти тесе сăпат, хисеп, вăхăт, наклонени тăрăх улшăнман, ĕçĕн паллине кăтартакан, предложенире обстоятельство пулакан глагол формине калаççĕ». Пире ку палăртăмра малтанхи пай «сăпат, хисеп, вăхăт тăрăх улшăнмасть» тени питĕ кăсăклă пек туйăнать.

Тӳрех асăрхаттарар, чăваш чĕлхе наукинче *-са (-се)* аффикслă кӳлепесене курмасăр иртнĕ вăхăт тесе палăртни пур*. Хăйне уйрăммăн илнĕ чухне *-са (-се)* аффикслă деепричастисен тури калаçура иртнĕ вăхăта палăртас сĕмĕ пур, анчах та кун пек чух ĕçхĕлтешсем сăпат аффиксне йышăнмаççĕ

| | | | |
|---|---|---|---|
| эпир<br>эсир<br>вĕсем | кайса, килсе | эпĕ<br>эсĕ<br>вăл | кайса, килсе |

Н.И.Ашмарин *-са (-се)* аффикслă ĕçхĕлтеш сăпат, хисеп, вăхăт тăрăх улшăннине палăртать. Вăл çапла çырать: «То же деепричастие обнаруживается в составе особой формы прошедшего времени, соответствующей по значению французскому passe indetini и употребляют в малокарачинском говоре.

| | Ед. ч. | Мн.ч. |
|---|---|---|
| 1 л. | кайсатăп | кайсатпăр |
| 2 л. | кайсатăн | кайсаттăр |
| 3 л. | кайса | кайса»** |

Н.И.Ашмарин кун пек сăпатланăва аваллăхран юлнă форма тесе палăртать те *кайсатăп* «Я есмь пошедши», *кайсаттăм* «Я был пошедши» тесе вырăсла куçарать. Автор каланине тĕпе хурсан, *кайсатăп* тенинче *кай-са-т-ăп* пĕлтерĕшлĕ пайсем пуррине палăртмалла.

* Федотов М.Р. Чувашский язык в семье алтайских языков. – Ч. 3. – Чебоксары, 1986. – С. 106–109.

** Ашмарин Н.И. Заметки по грамматике чувашского языка // Чувашский язык / Труды ЧНИИ. – Вып. 66. – Чебоксары, 1976. – С. 64.

Апла пулсан *-са (-се)* аффикслӑ деепричасти вӑхӑт, сӑпат, хисеп тӑрӑх улшӑнни авалхи формӑра кӗретех.

Н.И.Ашмарин *-са (-се)* аффикслӑ деепричасти вӑхӑт, сӑпат, хисеп тӑрӑх улшӑннине малтан иртнӗ вӑхӑт формисенче те курма пулнине ҫырать те ҫакӑн пек тӗслӗхпе ҫирӗплетет:

| | | |
|---|---|---|
| 1 с. | кайсаттӑм | кайсаттӑмӑр |
| 2 с. | кайсаттӑн | кайсаттӑр |
| 3 с. | кайсаччӗ | кайсаччӗҫ* |

Н.И.Ашмарин нихӑш ӗҫӗнче те *-са (-се)* аффикслӑ кӳлепесем сӑпатсӑр формӑсем пулнине каламасть.

Сӑпатлану парадигмине *-чӗ (-ччӗ)* аффикспа кӑткӑсланнине сӑнаса сӑпатлану парадигмине икӗ вырӑнта ҫапла парать:

пӗр. хис.

1 с. пулсаттӑм (ччӗ) – я сталъ было, я сделался было
2 с. пулсаттӑн (ччӗ)
3 с. пулсаччӗ

нум. хис.

1 с. пулсаттӑмӑр (ччӗ)
2 с. пулсаттӑр (ччӗ)
3 с. пулсаччӗҫ**

Тепӗр вырӑнта иртнӗ вӑхӑта палӑртакан икӗ глаголӑн сӑпатланӑвне панӑ:

пӗр. хис.

1 с. каласаттӑм(ччӗ) – я тогда сказал было;
тарсаттӑмччӗ(ччӗ) – я тогда убежал было;
2 с. каласаттӑн(ччӗ) тарсаттӑн(ччӗ)
3 с. каласаччӗ тарсаччӗ

---

*Ашмарин Н.И. Заметки по грамматике чувашского языка // Чувашский язык /Труды ЧНИИ. – Вып. 66. – Чебоксары, 1976. – С. 64.

** Ашмарин Н.И. Материалы для исследования чувашского языка. – Казань. – С. 292–293.

нум. хис.

1 с. каласаттăмăр(ччĕ) тарсаттăмăр(ччĕ)
2 с. каласаттăр(ччĕ) тарсаттăр(ччĕ)
3 с. каласаччĕç тарсаччĕç (С. 319–320)

Н.И.Ашмарин ĕçĕсенче нихăшĕнче те малтан иртнĕ вăхăт аффиксĕ *-сатт (-сетт)* евĕрлĕ хутлă пулнине каламан, вăл çапла çырнă: «Предварительное действие слагается из деепричастия соединительного на «*са, се*» и глагола усеченного – *ттăм(ччĕ)...*» (С. 307). «Слагается» тенине кунта «состоит из таких элементов» тесе ăнланмалла. Çапла вара, Н.И.Ашмарин ĕçĕсенче *-са (-се)* аффикслă деепричастисене «сăпатсăр е сăпатланман формăсем» тесе палăртни çук, автор вĕсене «глаголăн деепричасти формисем» тенĕ.

Вырăс чĕлхин витĕмĕпе пулас, чăваш чĕлхинче те пур деепричасти, причасти формисене «сăпатланман е сăпатсăр» формăсем теме пуçланă. Кун пек каласси, эпир сăнанă тăрăх, малтанах В.Г.Егоров ĕçĕсенче палăрнă. «Неспрягаемые формы глагола» текен термин унăн 1957 çулта тухнă наука грамматикинчи «Глагол» текен пайра та пур. Ун хыççăн И.П.Павлов ăна чăвашла «Глаголăн сăпатлă мар формисем» тесе ят парать. Паллах, Н.И.Ашмарин *-са (-се)* аффикслă ĕçхĕлтешсене сăпатсăр форма теме пултарайман, мĕншĕн тесен вĕсен сăпатланăвĕ куçкĕретлĕ. Çавнах эпир *-ас (-ес)* аффикслă пулас пайташ пирки те калама пултаратпăр. Çак пайташсем сăпатланнине кура тăркачах вĕсене «сăпатсăр» теме хал çитмест.

пĕр. хис.

1 с. вулассăм, курассăм, пĕлессĕм (килет, пур, çук)
2 с. вулассу, курассу, пĕлессӳ
3 с. вуласси, курасси, пĕлесси

нум. хис.

1 с. вулассăмăр, курассăмăр, пĕлессĕмĕр
2 с. вулассăр, курассăр, пĕлессĕр
3 с. вуласси, курасси, пĕлесси

*-Са (-се)* аффикслă ĕçхĕлтешсем вăхăта палăртни куçкĕретех, çавнах *-ас (-ес)* аффикслă пулас пайташсем пирки те каламалла, анчах та малтанхи иртнĕ вăхăта, иккĕмĕшĕ пулас вăхăта палăртать.

Чăваш чĕлхинче деепричасти аффиксĕсен аталану форми те тĕлĕнмелле кĕретĕн курăнать. Пĕрремĕшĕнчен, *-а(-е)* аффикслă деепричасти ытти тĕрĕк чĕлхисенче те пуррине палăртаççĕ чĕлхеçĕсем; *-са (-се)* аффикслă деепричасти пирки иккĕленӳсем пур: ăна хăш-пĕр тĕрĕк чĕлхисенчи *-са (-се)* причасти формипе çывăхлатма тăрăшаççĕ, анчах та ку çителĕклĕ ĕнентерӳллĕ мар. Пирĕн шутпа, *-са (-се), -сан (-сен), -сассăн (-сессĕн)* деепричастисен никĕсĕнче *-а (-е)* аффикслă форма выртать, ыттисем пурте унпа çыхăнса аталаннă пек туйăнать.

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | -а | | | -е | |
| -с | -а | | -с | -е | |
| -с | -а | -н | -с | -е | -н |
| -с | -а | -ссăн | -с | -е | -ссĕн |

Çак аталанăва пăхсан акă мĕн курăнать: *-а (-е)* аффикссем – чи авалтан пыраканнисем. Пĕлтерĕшĕпе тата функцийĕсемпе ку деепричастисем чăваш тата ытти тĕрĕк чĕлхисенче пĕр евĕрлех. Хальхи чĕлхере *-а (-е)* аффикслă деепричастисем хăйсем тĕллĕн (уйрăммăн) çӳресшĕн марри курăнать. *Ăна кура эпĕ те пулла тухса утрăм. Çырмине кура кĕпер пысăках пулма кирлĕ мар* (Алка) йышши предложенисенче *кура* сăмах деепричастирен хыççăмаха куçма пултарни пирки те калаçаççĕ чĕлхеçĕсем.

И.П.Павлов *-а (-е)* аффикслă деепричастисем пĕлтерĕшĕпе *-са (-се)* аффикслисене çывăх пулнине палăртать, çавна май вĕсене пĕр-пĕринпе çăмăллăнах улăштарма пулать.

пăха тăрать – пăхса тăрать
кура тăран – курса тăран
пăха юл – пăхса юл т.ыт.те.

*-Са (-се)* аффикс çумне *-н* элемента хушсан *-сан (-сен)* формант йĕркеленет, çапла майпа çак аффикс вăхăта кăна мар, услови пĕлтерĕшне те палăртма пуçлать. Асăрхăр: *Хĕвел çӳле хăпарса çитсен кайăк кăвакалĕсем хăмăшлăхран тухми пулчĕç* (Кипек. Кайăк тусĕ) предложенин пĕрремĕш пайне пĕлтерĕше пăсмасăрах çапла улăштарма пулать:

Хĕвел çӳле хăпарса çитсен...
Хĕвел çӳле хăпарсан...

Çакă вăл *-са (-се)* аффикслă формăсем пĕлтерĕшĕпе *-сан (-сен)* аффикслисемпе пĕр пекрех пулма пултарнине систерет. Çав йĕркепех эпир *-сан (-сен)* аффикслă деепричастисене çăмăллăнах *-сассăн (-сессĕн)* аффикслисемпе улăштарма пултаратпăр, пĕлтерĕш кун пек чух пачах та улшăнмасть: *вуласан – вуласассăн, сиссен – сиссессĕн; утсан – утсассăн.*

Чăн-чăн деепричасти формисем çапла майпа *-а (-е), -са (-се), -сан (-сен), -сассăн (-сессĕн)* аффикссемпе кăна пулаççĕ. «Хальтерех пулса кайнă деепричастисем» тени тĕрĕслĕхе тӳр килмест, мĕншĕн тесен вĕсем пурте хальхи чĕлхере усă куракан икĕ е виçĕ чĕрĕ аффикс пĕрлешнипе пулнă. Сăмах е сăмах формисен пайланулăхне Докулил принципне тĕпе хурсан, вĕсем хальхи чĕлхере кашни хăйĕн формине те, пĕлтерĕшне те çухатман. Çапла майпа: *-массерен (-мессерен)* пĕр аффикс мар, ăна деепричасти форми теме нимĕнле сăлтав та çук: *-ма (-ме)* – инфинитив аффиксĕ, *-серен* – тăтăшлăх категорийĕн аффиксĕ (танл. *килсерен, ялсерен*). Пĕрлештерӳ çулĕ çине тăрсан *сырмисерен пĕвисем* тенĕ чухне *-исерен* пĕр аффикс теме лекет. Ку, паллах, йăнăш çулпа чупма хушни пулать.

Çав йĕркепех *-нăçем (-нĕçем), -иччен, -нăранпа (-нĕренпе), -уçăн (-ӳçĕн)* аффикссене палăртмалла мар пĕтĕçсе ларнă пĕрлĕхлĕ формантсем теме нимĕнле сăлтав та çук.